# ЭРНСТ ФИШЕР

*Австри*

## МИРШĔН ТĂРАТПĂР ЭПИР

Тӑвӑл тухать, аслати авӑтать,
Ҫумӑр ҫапать кантӑкран.
Вӑрҫӑ ҫилпе тапранмасть, тапранать—
Мул хуҫисем аснӑран.

Тӑвӑл иртет, нӳр вӑрман силленет,
Кайӑк каллех хӗпӗртет.
Мир — пӗлӗтрен вӑл анмасть ҫӗр ҫине,
Миршӗн ҫын хӑй кӗрешет.

Миршӗн тӑратпӑр эпир, тӗл — пӗрре:
Вӑрҫӑ чӗртме парар мар!
Пусмӑрҫӑсем тепӗр хут пур ҫӗре
Кӗҫ хыптарасшӑн пушар.

Ӳстӗр усламӗ, — сураҫҫӗ анчах
Пирӗн таса юн ҫине!
Ырӑ—хӑватлӑ, усал — ҫав-ҫавах
Пӗтмӗ вӑл хӑй тӗллӗнех.

Хамăран пирĕн татса памалла:
Вăрçă-и, мар-и ыран.
Эй, ача амăш, тăван ывăлна
Вилĕм е пурнăç сунан?

Пурте „вăрçмашкăн памастпăр!“ тесе
Пĕр сасăпа кăшкăрсан,
Мир çирĕпленĕ, вăрçа çĕнтерсе,
Лăпкă кил-çурт пулĕ сан.

Пур тĕнчери тӳрĕ чунлă çынсем,
Халăхсене хăтарар!
Мир — пĕлĕтрен анас çук, хĕрхенсе,
Вăрçă — тĕнче йăли мар.

Çыхăр пулас вăрçăсен аллине,
Çăлăр инкек-асапран тĕнчене,
Миршĕн çĕкленĕр карах.
„Чарăн!“ теер, кăшт пуçне йăтсанах,
Шăл хăйракан хурахла ушкăна,
Вăрçă тек пулмĕ вара!